МАРТШЕН

# КАПКӐН

5 №
(86)



**Тасату нумайӑшне шиклентерет.**

— Ей, ҫветуй хӑватлӑ турӑ амӑшӗ! Тасату никекӗнҫен ҫӑлӑнма йулма вӑйхават пар мана!

# Пӗртен пӗр паттӑр.

Тӗнӗ хирӗç кӗрешес ӗç вăйсăрланса ларђӗ. Ун вырăнне пуçсем пикенсех „ӗçтеме“ пуçларӗç. Паптиссон те çӗнӗсем пулса кргеççӗ. (Ретаксине килнӗ çырусенђен).

Иван Петровиђ Прохвостăв апат çисе тăранђӗ. Тутă кушак пек карăнса илђӗ те, çемçе т̆иван çине тăсăлса выртрӗ.

— О а-ах!..—анасласа, çăварӗ çине вӗђђеç хӗрес хывса тултарђӗ.

— Воспоти, ман Вађă та тăна кӗме пуçларӗ! Вун пӗр çул комунисра тăрса, çамки çине пӗр хӗрес хывманђђӗ... Ей, турă, тăна кӗртех ман айван Вађăна!—терӗ Прохвостăвăн арăмӗ.

Прохвостăв т̆иван çинђе тепӗр хут карăнса илђӗ те, Потхалимăв Çтаппанӗн пайанхи сăмахӗсене аса илђӗ:

— Хам ђӗлхерен те шуйттан ђӗпӗтсе туртрӗ пулмалла та,—мӗне кирлӗ пулнă ăна ђиркӳ çинђен тапратма?—„Тене хирӗç кӗрешес ӗç—пирӗн ӗç мар вăл“—терӗ те, епӗ: çапла пулмасăр çапла, тесе пӗтӗм йатăм çак икӗ сăмахшăн Ораттăрăв сволăђӗ сиксе ларђӗ те:—Тасату пуçланнине пӗлетне? терӗ. Карӗ, карӗ,—ашӗне те, ывăлне те çветтуй сывлăшне те асăнмасăр хăвармарӗ. Çын та мар ӗвтӗ. Касвă лартнă сволăђ, прости воспоти!.. „Тасату“!.. Курăпăр кама тасатнине...

Прохвостăв тепӗр йенне çаврăнса выртрӗ те, харлаттарса çывăрса карӗ.

Çак вăхăтра Ишехерувимăв пуп:

— Пурнатпăрхă, Хавроњйă. Сывă пулсан, капла кăна пурăнмăпăр. Ав, Прохвостăв та пайан çӗлӗк илсе тайăлђӗ... Пурнатпăр, карђăк.—тесе çемçе тӳшек çине улăхса выртрӗ.

Иункштурмăв комсомолӗс улăм ури хыçӗнђе Кимăвă комсомолккăпа пăшăлтатат̆.

-- Ђунăм, кӳр аллăна! Ах, Ухиме! Саншăн манăн çамрăк ђӗрем çуннине курсан, есӗ ӗненӗттӗн мана... Иурат мана. Ухиме! Мерђенӗм!..—тет.

Хӗрӗ турткаланат̆. Тăнпуçсăрскер ђиркӗвелле сӗтӗрет.

Иункштурмăв Ухимене ытла йуратат̆. Уншăн вăл ђиркӗве мар, çăва патне кайма та хатӗр:

— Апла пулсан, ат̆а, халех ат̆а! Хађ çӗрле. Çын курас çук...

— Вара сана ыттисем мӗн калӗç?

— Хут̆ те мӗн калађђăр... Кӳр аллăнă, терӗ те, Иункштурмăв Кимăвă комсомолккăна пуп патнелле вăрттăн çавăтса карӗ.

Прихкогорасхотăв хваттерӗнђе çап-çутă. Унта: Ратсионађскипе арăмӗ, Вхот̆ашђӗвпа Исхот̆ашђӗвă, Кворумăвпа Ђиркуђаравă, Сметтăвпа Аççикновскайă, тата ыттисем те çăварни тăваççӗ.

— Ырă хăнасем,—терӗ кил хуçи,—ыран типпе кӗрет вӗт. Иулашкинђен ӗçсе, çисе йулар, çапла-и, тăвансем?

— Çапла, çапла! Кам апла мар тет?..

Ӗçрӗç, çирӗç те:—Ей, пат-ша-а-а, ей тура! Кӗл-лӗ-ме-е и ре-ех илтсе-ем!—Иурлама тытăвђӗç.

Прихогорасхоттăв хваттерӗн ђӳређи айӗнђе урамра Хатӗрпулăв пионӗр пăхса тăрат̆.

— Ак, йепле кӗрешеççӗ вӗсем тӗнпе! Вӗсенђен, хамăртан аслă йулташсенђен тӗнпе кӗрешме пулăшу ыйтатпăр. Вӗсем: „Ей, патша“—тесе йанăртаççӗ... Парăп сире патша!—терӗ те, пуп çурђӗ йеннелле ђупрӗ.

Ђупат̆ те, шухăшлат̆: тӗнпе йепле кӗрешес? Унпа кӗрешнӗ ђух мӗн тумалла?—тесе пырат̆.

Пуп çурђӗ патне лашкаса çитрӗ.

— Мӗн тăвас ӗнтӗ хађ?—хăйӗнђен хăй ыйтат̆ Хатӗрпулăв.

Нумай шухăшламарӗ Хатӗрпулăв. Çыртма йӗмне антарђӗ те, пуп ђӳређи тӗлнех „тӗнпе кӗрешме“ ларђӗ...

Ишехерувимăв пуп ку вăхăтра Иункштурмăвпа Кимăвăна венђет туса ђиркӳрен таврăнат̆. Пăхат̆,—Хатӗрпулăв пионер „страмит̆“ туса ларнине курат̆. Ђупса пырат̆ те, Хатӗрпулăвăн хăлхине ђӳпӗк пек ђӗвсе йарат̆.

Хыгă тăпăлтарђӗ хăлхаран. Кађака пек çухăртрӗ Хатӗрпулăва.

Мӗсвӗн ађи! Килне ђупса çитрӗ те, салтăнмасăрах кăмака çине, асламăшӗ хыçне кӗрсе выртрӗ.

Йăх килмест. Куç хупăнмаст̆.

— Апла иккен тӗнпе кӗрешесси... Пиртен аслă йулташсем те хăлхаран туртасран хăраççӗ пулмалла. Тӗнпе кӗрешесси çинђен çăвăн пирки шухăшламаççӗ иккен вӗсем,—тесе нумайђђен шухăшласа выртрӗ.

Ула кушак аçи кăмака çине сиксе улăхрӗ. Мăррăл-мăррăл туса, Хатӗрпулăв çумне кӗрсе выртрӗ.

— Çăвăнпа иккен...—терӗ те, тенпе кӗрешес ӗçри пӗртен пӗр паттăр та тутлă йăхăшне путрӗ.

---

## Çӗрӗç Комиссариатӗнђе.

— Мереçкӗн йулташа кăларса йама сӗнет «Канаш» ретаксийӗ.

— Ăçта, кăмантировкăна и?

— Кăмантировкăпа унта... Тасатса кăларма, вот мӗн!..

— Ну! Мереçкӗна-и? Пӗртен пӗр литшонпăй çынна-и? Ни-ни-ни!..

---

Шăп çеç ларат̆ Мереçкӗн. Шарлакан çуђ Вăрттăн çу çинӗ кушак пек тугине çулат̆.

# Ленинграта Сӗнтӗрвӑррине куҫарни,—

## йе—Иуҫтитси Комиссариатӗнђи хутсене ӑсатакансем кикен ҫисе ђирлени

Сӗнтӗрвӑрринђи егем йевӗрлӗ ҫынсемех Шупашкартан ҫыру илђӗҫ.

Ма кулмастӑн, вулакан йулташ? Кул ӗнтӗ пӑртак!

Ҫыру илђӗҫ те, конвертне уҫса пӑхрӗҫ...

— Анне!—терӗҫ. — Ленинграта хӑҫан турттарса килнӗ Сӗнтӗрвӑррине? Тухса пӑхӑрха!. Уритски творетсӗ пури? Октапӗр 25-мӗшӗн проҫпекђӗ, Нева шывӗ, Путилӑв савӑђӗ, Смоđнӑй... Тӑ ђорт воҫми!.. Петӗрпепавӑл крепӗҫӗле Агмиралтгейски пӑшатан курӑнат-и?..

Тухса пӑхрӗҫ,—нимӗн те ҫук.

Мӗн ку? Ленинкратри ҫар проккуроне ҫырнӑ. Ђӑваш респуплӗкӗн Иуҫтитси Комиссариатӗнђисем ал пуснӑ. Анђах, ма Сӗнтӗрвӑррине йанӑ?

— Лайӑхрах тухса пӑхӑрха! Тӗплӗрех шырӑр!.. Ӑҫта та пулсан, вӑрттӑнтарах, ҫын курман кӗтессе пытанса ларман-и Ленинграт?

Ҫук. Машинискӑсем (Ленинкратски майра пулатпӑр тесе) тутисене писев сӗрни те ахалех пулђӗ—сӳйнӑ Иуҫтитси комиссариатӗнђисем.

— Аппарата массӑ патне ҫывхартас тенӗ йӑмах ахаđ пулмарӗ иккен, Иван Иванђӑ терӗ пӗр совслуш.—Нетокмӑштӑ аппарат, ђеллӑй Халӑх Комиссарӗсен Канашӗ Сӗнтӗрвӑррине куҫат, вво!

Сӗнтӗрвӑрри тепӗр хут хускалђӗ. Тытӑнђӗҫ тасатма ӳђрештенисене, и их! кӑна.

— Шуйттан, терӗ хула совеђӗ.—Ахаđ те ҫуртйӗр ҫитмест... Ларасђӗ Шупашкартах кут хӗссе! Комиссарсен Канашӗ ваđђи ӑҫтан тупса парас пулат-ха хваттер?—терӗ.

— Сӳйатӑн пуđ есӗ,—ђӑнах куҫат-и вара?—тесе ыйтрӗ тепӗр совслуш.

— Акӑ, ме, вула! Сӗнтӗрвӑррине, тесе ҫырни?

— Сӗнтӗрвӑррине, тенӗ.

— Халӑх Комиссарӗсен Канашне, тенӗ-и?

— Ҫавӑнта ,тенӗ.

— Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариаđӗн полошенийӗ, тенине куратӑн-и?

— Куратӑп.

—... Канашӗн ларӑвӗнђе ларса ҫирӗплетме йаратпӑр, тесе ҫырнине куҫу тӗсмӗр тет-и?

— Тӗсмӗртет.

— Иуҫтитси Комиссариатӗнђисем ал пуснине куратна?

— Куратӑп.

— Тата, мӗн шайттанӗ кирлӗ-и сана?..

Пӑхаҫҫӗ сӗнтӗрвӑррисем, кӗтеҫҫӗ. Анђах Комиссарсен Канашӗ Иуҫтитси Комиссариатӗнђисем тем пек хӑваласси та, Сӗнтӗрвӑррине куҫмарӗ. Тишкерӳ тӗлӗшӗпе Анани Михалђа хӗртсе илес пулатха куншӑн. Мотри, сана, куҫмаштӑн!..

Иуҫтитси Комиссариаđӗн кӗпђелерӗнђен тухмалла та, ҫав ҫуртрах Шупашкар районӗнђи Халӑх суђӗ шартлаттарса пурӑнат. Йамалла ҫырусене алӑкран тухса, алӑкран кӗрсе кӑна памалла.

— Ку хутсене ма кунта йанӑ?—терӗ Сӗнтӗрвӑрринђи лутра ђынлӑ ҫын.

— Ехе хе!.. Сровнӑ ҫитермелле пулнӑ та, Шупашкартан Сӗнтӗрвӑрри урлӑ Шупашкара йанӑ. Пӗлместӗн: пирӗн курйерсем пӗр алӑкран тухса тепринђен кӗриђђен виҫ кун иртет. Сӗнтӗрвӑрри урлӑ потђтӑпа йарсан,—икӗ кунта ҫаврӑнса ҫитет, ђутак! терӗ тепри.—Иуҫтитси Комиссариатӗнђе унта амерӗкле хӑвӑртлӑх...

Куславкана йамалла икӗ хута каđђех Сӗнтӗрвӑррине йанӑ.

— Ҫул май ӑшӑнса тухђӑр ӗнтӗ, терӗҫ пуđ Иуҫтитсирисем.

Шупашкарти потђтӑ кантурӗ Иссай Иванђ Танилӑва повескӑ парат. Танилӑв ку повеска илет те, пОвескӑ ҫинђе кӑтартнӑ укҫана илме курйера шантару парат.

Иссай Иванђ кӗтет кӗтет,—укҫа ҫук. Укҫа повески Сӗнтӗрвӑррине анкӑ-минкӗленсе пырса кӗрет.

— Ну, ну, ну!—теҫҫӗ сӗнтӗрвӑррисем.

— Йара пар! Шупашкартан Шупашкара йамалла ҫырӑва Китай урлӑ йарсан та ҫаврӑнса ҫитет, теҫҫӗ Иуҫтитсири ҫынсем.



Вулакан йулташ! Ҫӑварни хыҫҫӑн ҫакӑн питӳ куҫу ҫакӑн пек пулмари?

# Криттĕксен çапăçăвĕ.

Шупашкарта, хамăр тĕп хулара, пĕр лаптак пур. Тархасшăн Хĕрлĕ лаптак, тесе ан шутлăр. Хĕрлĕ лаптакра унта пĕçтĕп таран кĕркуннепе çуркунне пылчăк пулать, тата касçенче унта тĕттĕм пирки, çÿрекенсем пĕр-пĕрин çине пырса тăрăнса пуçĕсене çĕмĕреççĕ, çамкисем çине мăйракасем лартаççĕ. Ку лаптак «Сунтал» лаптакĕ! Сисрĕри? Туйăри?

Кунта вăхăтран вăхăта тухса криттĕксем çапăçаççĕ. Мĕнле фискультурнĕксен футболла выляма, йе çарапакартан пĕрпĕрипе кĕрешме масар хыçĕнче пулсе хунă карта пур, çавăн пекех криттĕксен те «Сунтал» лаптакĕнче пĕрпĕрипе çапăçма пулсе хунă карта пур. Карти çуллĕ, шăтăксем пĕртте çук. Çултаlăка 2 тенкĕ парса çак лаптака кĕме ирĕк илмесен, сана ку картана нийепле те кĕртес çук—хуйте есĕ Шалти Ĕçсен Комиссарĕ пул! Шалти пулсан та, шалтине кăтартмаççĕ: Çавăн пек ку лаптакри йĕркесем.

Анчах, есĕр криттĕксем мĕнле çынсем иккенне пĕлетĕриха? Криттĕксем вĕсем пирĕн пек çынсем мар, шăлт уйрăм етемсем. Епĕр, кукша пуçсем, хамăр мăн асаттесене уписансенчен кăларатпăр пулсан, криттĕксем хăйсен мăн аслашшĕсене тикăртан кăлараççĕ. Криттĕксем вĕсем етемсемех. Пирĕн пекех вĕсем: ахаль чухне «Красвăй востокне» те сыпаççĕ, алиментсем те тÿлеççĕ хăш чухне, усĕрĕлсен милитси путкисене те кĕрсе канаççĕ. Уйрăмĕ, пирĕнпе танлаштарсан, çакă çеç. Халĕ ăнлантăр пулĕ ĕнтĕ криттĕк мĕнле фрукт иккенне.

«Сунтал» лаптакĕнче ку етемсем нумайах марччĕ. Пĕрре, иккĕ... суса та пĕтеретĕн. Çапăçма картана хăвалаcа кăларсан, пăхма та намăсчĕ, сăмсана пăратăн та тухса кайатăн. Начар çапăçатчĕç. Темрен килнĕ вара ку йапала?! Те начар çитернĕ вара?

Анчах ку аплан-çаплан, çак иртнĕ вăхăтра криттĕксем вăй илчĕç курăнать. Иртнĕ вырсарникун пулса иртнĕ çапăçу пит те паттăр, пит те чаплă иртрĕ. Иалавин текен йалавлă криттĕк хăйне хирĕç тăнă патмар Патманпа Микула криттĕксене пĕтĕмпех кышласа, пырши пакартийĕсене кăларса пĕтерсе, çĕр çумне çĕклесе çапрĕ. Ай-й-йай хытă çапăçрĕç. Кун пек çапăçу «Сунтал» лаптакĕнче чăваш поечĕсен Месопотамирен Атăл çине килсе вырăнаçнăранпа та пулман пулас.

Çапăçăвĕ пĕр поет пирки тухса кайрĕ. Елкер поет пурне те турĕ. Вăл пулман пулсан, тен ку çапăçу та пулас çукчĕ пулас. Çав анчах кунта айăплă... Каламха еппин йĕркипе.

Елкер поет «Хĕнхур айĕнче» çÿресе «Самана» йатлă пĕлĕм пĕçернĕ. Криттĕксем кăна курнă. Тикăр ăрăвĕнчен тухнăскерсем, ку пĕлĕмĕн лайăх шăршине сиснĕ.

— Тавай çута! Как çмейĕш?!

Тытăнаççĕ криттĕксем пĕлĕме урлă та пирлĕ хыпкалама. Пĕлĕмĕ пĕçерет, шăл сумне сыпăçать. Пĕри те хыпса çăтаймасть. Харкашса кайаççĕ криттĕксем, пĕрпĕрин çине сиксе лараççĕ, пĕлĕмçе айăплама пуçлаççĕ... Тĕнче кисренсе кăна тăрать... Вара лаптак хуçи Хура Мĕтри криттĕксене çапăçма, йулашки сăмах калама картана кăларса йарать. Вара çитет кунта «самани» те, «хĕнхурĕ» те.

Курсах, куртăм, каласа парам еппин.

Çапăçу пуçланчĕ. Висĕ алăкран висĕ криттĕк тухаççĕ; пĕри Патман, тепĕри Микула, виççĕмĕшĕ Иалавин. Чиркри порετсем пекех малтан пĕрпĕрне алă пачĕç, унтан вырăнĕсене тăчĕç. Пуçланчĕ.

Иалавин криттĕк вырăнĕнчен сиксе тăчĕ те çил пек чупса кайса хумене пуçĕпе тăрăнчĕ. Иан! туса кайрĕ хуме. Саттурăн кăна куракансем çине çаврăнса тăчĕ те, çамкине кăтартрĕ. Ни мăйрака, ни хунар, нимте çук. Унтан патмар Патман çамкипе тăрăнчĕ хумене. Каллех хуме шанкăртатса кайрĕ. Унтан Микула тăрăнчĕ пуçĕпе хумене. Иан! Иан! анчах йанăрать хуме. Ку йапалана криттĕксем çамкисем çирĕп иккенне куракансене кăтартасшăн турĕç. Ку йăла ĕмĕртенпех пыракан йăла (криттĕксем хушшинче).

Çамкисене тĕрĕслесен, пуçланчĕ самай çапăçăвĕ. Иалавин криттĕк ыттисенчен вăйлăрах хĕçпăшалланнă. Унăн аллинче тăватă куроклă пистолет, çитмĕл вĕçлĕ хĕç, хыçалтан кантăрапа кăкарнă, сĕтĕрсе çÿрет Полонскине те, енчиклопетине те. Патманĕ «сотершанипе формине» анчах тăхăннă, аллине улмапа перекен пăшал çеç тытнă. Çапах хăрушă сăнлă. Микулайĕ, хăй çапăçсах кайасшăн мар пулас, «Çутуххисене» хăй умĕнчен тĕртсе пырать, «итеалиссене» пĕр ушкăн кăларнă, хăвалать.

«Ей, тăрăр, вăй илнисем,
Майлăр ăна, тасатăр,
Ахах мерчен пĕрчисем

Нумай унта, кăларăр... ахăрса йачĕ Патманĕ. Сиксе тăчĕ йалавпа Иалавинĕ.

«У нас револьверы в четыре курка,
Сабля семьдесят левый гвута»...
«На четыре версты будет пророе,
А из раны вдруг человек полез»... хăратать хăйне хирĕç тухнă криттĕксене. Лешсем «сотершанипе формине», «итеалиссене», «мистĕксене» вăслатса йараççĕ Иалавин çине. Иалавинĕ пăркалавать çеç. Кăшкăрать, хĕçĕпе сулкалать, куроксене шартлаттарать:

— Тĕп шухăшне шырăр, тĕп шухăшне! Вăтам кресчен итеологийĕ çук унта, пулсассăн та кăлт çеç. Литенчиклопети те çапах калать... Пăркалавать.

Лешсем ахӑраҫҫӗ: мӗн пӗлмелле!

Кипперпӑлӑ!—вӑт мӗн пӗлмелле...

Есӗ ху хӑвӑн локиккуна пӑхха, авӑ мӗнле сӑмсу айӗнҭен пытанмалла выҭаса тӑрат̆...

— Миҫтӗксем!.. Итеалиссем!..

— Ес ху миҫтӗк! Мерешковский есӗ!

— Киппиус, асамҫӑ!

— Акӑ ӑҫта! Намӑс та калама — ҫавӑн патнех ҫитрӗ.

А, есӗ аппа иккев!.. Тытӑнҭӗҫ пӗрпӗрне тӳпелеме.

— Тӳнк! те тӳнк!.. Шанк! та шанк! Ҫавраҫил пек таврари сывлӑш ҫаврӑнса тӑрат̆. Айакпӗрҭисем, пыршӑ-пакартӑсем сирпӗнеҫҫӗ кӑна!

Хайхи ҫапӑҫа-ҫапӑҫа Патманпа Микулай «виҫӗ хыр хушшине кӗрсе кайса, аташса кайаҫҫӗ». Ҫитменнине тата Патманӗ „уҫнӑ алӑках ҫӗмӗрме тытӑнат̆“. Иалавинӗ кӑсене тӗвет анҭах. Кӑсйинҭен Ваҫанккине, Алентейне, Виктӑрӑвне кӑларат̆ те пуҫлат̆ каллех Патмансене патлаттарма. Лешсем: «хир-йал», «хир-йал», пушалстӑ ан тив ӗнтӗ, текелесе йахтӑ тавра ҭупкалаҫҫӗ, йалти ҫӗнӗ хунавсене те кӑтартса пӑхаҫҫӗ—ҫук, лешӗ ӗнселет кӑна. Патманӗ «пӗррӗмӗш положенине» те, «иккӗмӗшне» те, «виҫҫӗмӗшне» те кӑтартса пӑхат̆—ҫук, ҫӗнтереймест. Аҫтан ӑна ҫӗнтересха, унӑн аллинҭе тӑватӑ куроклӑ пистолетпа ҫитмӗл вӗҫлӗ хӗҫ те?! Улмапа перекен пӑшалпа нумайах хӑратас ҫук.

Кушкӑ Макҫӑмӗ тата сиксе тухрӗ.

Патакпа вӑрҫтарат̆ криттӗксене. Ана, мура, интерес—картинккӑ тӑвасшӑн кино ваҭҭи.

Макҫӑм ҫавӑрат̆ аппаратне, Иури Сайтсӗвӗ илемлӗрех ҫапӑҫтарасшӑн— кӑшкӑркалат̆ профсойусне мансах—премӑ пета! Криттӗксем ахӑраҫҫӗ.

5 сехет те 35 минут та $22^{1}/_{2}$ ҫеккунт ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, ҫапӑҫу вӗҫне тухат̆. Иалавин Поҭанскипе леш криттӗксене ӗнсерен парат̆ те, лешсем урисене тӑратса вырҭаҫҫӗ те...

— Ҫук... Елкер вӑл хуйхӑллӑ мар, хуйхӑсӑр поет... Вӑл вӑл йенҭен тӗреклӗ тӑрат̆... Килӗштерӗри ҫакӑнпа?

— Килӗштетпӗр, килӗштетпӗр...

Килӗшмесен майӗ те ҫук: «сотершанийӗпе форми» вуҫех ҭӗрӗлсе пӗтнӗ, «положенийӗсем» кисренсе ӳкнӗ, „локикки“ таҫта тарнӑ...

— Килӗштетпӗр, килӗштетпӗр...

— Хаҭ ӗнтӗ локиккине пыр та туп...

Выртса йулҭӗҫ икӗ криттӗк виҫӗ йахтӑ хушшинҭех. Аманнӑ. Ҫӗмрӗлнӗ. Ҫӗнтернӗ криттӗк Иалавин араслан пекех ҭаплӑн, вашшӑ, лаптакран тухса утрӗ.

Куракансем нумайҭҭен Иалавин атрӗсӗпе саламсем кӑшкӑрҭӗҫ...

Ҫапла пулса иртрӗ криттӗксен ҫапӑҫӑвӗ. Пит паттӑр пулҭӗ. Текех кун пек ҫапӑҫу курас та ҫук пуҭ ӗнтӗ ҫак «Сунтал» лаптӑкӗнҭе. Ей, курӑпӑрши? Курӑпӑрха, курӑпӑр.

«Сунгал» лаптакне ҭас-ҭасах ҫӳресха... Сире те унта ҫӳреме канашлатӑп. Хакӗ ҫулталӑка 2 тенкӗ кӑна. Пӗрте ӳпкевлӗ пулмӑр.

Мики Сантӑрӗ.

## Тасату умӗнхи сыхлану.



— Мана ыран турра ӗненменсен пухӑвӗнҭе токлат тума хушрӗҫ.

— Ан кай, Коттик! Парттирен кӑларса пӑрахсан, ҭиркӗве те кӗртмӗҫ тата.


## *СОВТӐМПӐШАЛСЕН ӐМӐРТУВӖ.*

«Капкӑнӑн» 6-мӗш номӗрӗнҭен Ҭӑваш республӗкӗнҭи совтӑмпӑшалсен ӑмӑртувӗ пуҫланат̆. Сирӗн хулари, йалти район ҭентӑрӗнҭи уҭрештенисенҭе совтӑмпӑшалсем пурах. Ҫырӑр вӗсен паллӑ ӗҫӗсем ҫинҭен. Вӗсен ӗҫӗсемпе паллашма «Капкӑн» ҫырӑнса илӗр.

Капкӑн хакӗ: 12 уйӑха—1 тенкӗ, 6 уйӑха—60 пус, 3 уйӑха—30 пус, 1 уйӑха—10 пус.

«Капкӑвшӑн» укҫа куҫармалли атрӗсе маннӑ пулсан, аса илтеретпӗр:

**г. Чебоксары, Канашская, 15. Конторе газеты „Канаш“**

# Ђеххӑв вӑхӑђӗ,—халђхи ӗҫсем.

(Ђеххӑвӑнне вӑрласа «Капкӑна» йаратпӑр).

Кукӑрпӗкувки (Сӳсменпайав р) йалӗнђе Кукша Макар картинђен тапратса тултарнӑ ӗнине вӑрласа кайнӑ. Макар,—шар курни ҫинђен уколросӑска йевит турӗ. Тепӗр иквеҫ еререв ӗне вӑррине «вӗри йӗрпе» йӗрлеме УР пуҫлӑхӗпе ҫыруҫӗ Макар патне килђӗҫ.

— Ну, кама шанмастӑн, Макар?—тесе ыйтрӗ УР.

— Шанмасси... Ҫав Кукӑрпуҫ Мӗтрине тӳрӗ алаллӑ мар, теҫҫӗ те... Пуйан ҫын та, калама та хӑрушӑ ун ҫине, терӗ Макар.

— Ну, ну! Кӑтартӑпар епӗр ӑва «хӑрушӑ». Айта Пӑттикашкӗн йулташ, кайар-ха унта, терӗ мӑн УР-ӗ.

Тухса кайрӗҫ Кукӑрпуҫ патне. Пунеттейсене йертрӗҫ хӑйсемпе пӗрле. Ҫитрӗҫ.

— Кукӑрпоҫҫӗв Мӗтрийӗ есӗ пулатна?

— Епӗ пулатӑп.

— Тек-ес. Вӑт мӗн. Сирӗн йалта пӗр йапала ҫухалнӑ. Ҫынсем сана шанмаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та сан кил ӑшђикве ухтарса пӑхмалла... Пӑттикашкӗн йулташ, ҫыр ухтару протокколне, терӗ асли.

Пӑттикашкӗн Кукӑрпуҫӑн хушаматне, йатне, миҫе ҫултине, ђӑваш иккенне, ҫӳҫӗ мӗн тӗслине тата ытти паллӑсене ҫырса хуђӗ те, пӳртри йапаласене ухтарма пуҫларӗҫ. Малтан кӑмака ҫинђи турпассене варӑнтарса пӑтерђӗҫ.

— Ҫыр. Кӑмака ҫинђе турпасран пуҫне ним те тупӑнмарӗ, те.

Уколросӑск пуҫлӑхӗ камака ҫинђен анса, кӑмака айне кӗрсе карӗ. Кӑмака айӗнђен кӑшкӑрат:

Ҫыр, Пӑттикашкӗн! Кӑмака айӗнђе ухват, турђка. ҫатма аври, кӑмака мелӗки, тата... тата..

Ҫыртӑм. Тата мӗн пур?

— Тата пӗр ђетвӗрт кӗленђи тупӑнђӗ, тесе ҫыр.

«Тата пӗр ђетвӗрт кӗленђи тупӑнђӗ»—ҫырса хуђӗ те ҫыруҫӑ:

— Ђетвӗрт ӑшӗнђе мӗн пур?—тесе ыйтрӗ кӑмака айӗнђи пуҫлӑхран.

— Ђим. Мӗн ши кунта ђӑнах. Ку йапала ҫухалнӑ йапалава тупас ӗҫре мӗн те пулив кӑтартма пултарат... Ҫыр. Ђетвӗрт тупӑнђӗ, те.

— Сырнӑ. Ӑшӗнђе мӗн пур?

— Ӑшӗнђе-и? Парха шыв курки!

Кӑмака айӗнђен пуҫне кӑларса, ђетвӗртри шӗвӗ йапалана шыв курки ҫине йарса пӑхрӗҫ. Куҫа саррӑн куравӑт. Авђах тутанса пӑхмасӑр ӑҫтан пӗлес тејӗн. Пуҫлӑх тутанса пӑхрӗ те:

— Кӗрђеме ку, терӗ.

— Ӑҫта-ха! Кӗрђеме ку тӗслӗ пулакан марђӗ... Ҫук, кӗрђеме мар ку. Простӑ.. Лайӑхрах сӑра. Аван, аван. Хурлама ҫук,—аван сӑра...

— Мӗн калаҫав! Сӑраран пыл шӑрши перет-и вара? Кӳр-ха куркӑна...

Пуҫлӑх тепӗр шыв курки тултарса ӗҫсе йађӗ:

— Кӗрђемине кӗрђемех. Нађартарах кӗрђеме...

— Мӗн калаҫав! Есӗ мана, кӗрђемепе сӑра тутине пӗлмен ҫын тетӗн-и?

Пуҫлӑхпа ҫыруҫ тепрер шыр курки тултарса «тутанса» пӑхрӗҫ. Ђетвӗрт пушанса йулђӗ.

— Ну, мӗн ҫырасха?—терӗ ҫыруҫ.

— Ҫыр. Ђетвӗрт кӗленђи тупӑнђӗ, те.

— Ҫырнӑ. Ӑшӗнђе мӗскер?

— М... та!.. Ђетвӗрт кӗленђинђе мӗн пулнине пӗлесшӗн тем пек тӑрӑшса та, унта мӗн пулнине пӗлме пулмарӗ, тесе ҫыр.

Ҫыруҫ ҫырса хуђӗ. Протоккол айне малтан хӑйсем, кайран—пунеттейсем, унтан—Каҫӑрпуҫ Мӗтрийӗ ал пусрӗҫ. Унтан вара пӗрпӗрне ал парса:

— Вӑрласа кайнӑ ӗне тупӑнмарӗ, тесе тухса кайрӗҫ.

---

# Алло! Алло!..

## Тутаркас районӗнђи Ҫӗмӗртлӗх ђамей йалӗҫтӑвкомне ђӗнетпӗр, итле

Виҫӗ ҫул кайалла Притан Максӑмӗ вӑрман уполномођӗнӗнӑйӗ пулни?

Ма вӑл, хресђенсем хывнӑ ҫирӗм тенкӗ салока вӑрманлӑхран илсе, хӑй аллинђе тытса тӑрат?

Алло! Ђемейри пуҫлӑхсем, сирнӗтен ответ кӗтетпӗр.

## Шупашкарти рапклуп, Аллло-о! Алло-о-о, Шупашкарти рапклуп!!!

Сан вуламалли пӳлӗмӗнте ђӑвашла хаҫат шурналсем хӑҫан пулаҫҫӗ?

24 самант хушшинђе ответ пар, илтетне? Алло!

## Хӗрлӗђутай районӗнђи Ҫӗнтуканаш ҫыннине Кђаҫӗв Унтрине ђӗнетпӗр

Вӑрманлӑха пама пуҫтарнӑ укҫаран ытлашши йулнӑ 12 тенкӗ те 47 пус укҫана ӑҫта хутӑн, ей!

## Аслӑпатӑрйелӗнђи ушкӑнлӑ хуҫалӑхӑн правленийӗ!

Карапай Шӑмӑршӗнђе сирӗн йалти Макђин Иакавађӗсем пиллӗкӗн пиллӗк ђетвӗрт самокон ӗҫнӗ те, лаххана кӗрсе ӳхнӗ, тесе пӗлтерђӗҫ пире.

Сан вӑрмана сутса ӗҫмен-и вӗсем? Тӗрӗсле! Алло, тӗрӗсле!

**Çак номĕрта**

вулакансене „комунисăм“ тăвакан çынна кăтартасшăнҫҫĕ.

Ĕç вăраха кайнă пирки, «Капкăн» хăйĕн интенерне вырăна йарса пăхрĕте, «комунисăма» тума тытăнман та, тесе пĕлтерҫĕ.

**ВОЛОККИТТĂ!!!**

## Çăварни камиҫĕ.



— Ех, Михала! Тытха купăса... Еп хуçкаланам пăртак.

Комунпай мунҫинҫе лаша ăшĕнҫен йух-са тухакан шывпа çăвăнас вăхăт сывха рса килет ĕнтĕ.

## Шупашкар хули советĕнҫе.

— 1928 мĕш çул март уйăхĕнҫе:

— Çĕнĕ електростантсине Октăпĕр револютсийĕ 11 çул тултарнă кун хута йаратпăр.

Çав çулах октăпĕр уйăхĕнҫе:

— Електростантсине-и? теккапĕр уйăхĕнҫе хута йамасан, куçăма сур!

Çак çулах теккапĕр уйăхĕнҫе:

— Тупата, тура! 1929-мĕш çул йанварте хашлаттарма пуçлат електростантси.

Йанварте:

— Йешĕлĕ те йешĕлĕ, февралте хута йамасан...

Февралте:

— Мартăн 1-мĕшĕнҫе кĕрлеттеретпĕр.

Мартра?

Мартра... ним те ҫĕнмерĕç.

## Çуркунне умĕнхи шухăшсем.

Çуркунне çитет ĕнтĕ. Хресҫенсем акана тухма хатĕрленеççĕ, поетсем—çакăнса вилме ăвăс туратне шыраççĕ.

Хĕлле иртет. «Сунталăн» та тимĕр йĕлтĕрпе йарăнакансене «коҫккопешĕтсĕ» йат парасси тепĕр хĕле кĕриҫҫен пĕтет.

Март уйăхĕ пĕтнĕ çĕре çамрăксем паспăрт илме васкаççĕ.

Пурте çмтелĕхлĕ пулĕ: путрă, туххи, тута хĕретмелли писев, ÿт тĕслĕ ҫăлха, кĕске йупкăсем те пулĕç хулашăн. Йала ваҫҫи шăршлă формалинпа супперфосфат кĕскерех пулĕ.

Коркоп столовăйĕпе комунпай мунҫине çурхи шывпа йухса кайасса нумайĕшĕ кĕтеççĕ.

Сыхлан Пулăшу Комиссариаҫĕ! Атăл уçăлсан, вырăвтан вырăна куçса çÿрекен «инвалитсене» хирĕç есĕ те: я нервăнăй! —теме реппеттиси туса хур.

Хваттерсĕр çынсем Атăл хĕррингĕ шăнса ларакан лутккасене пăхкаласа çÿреме пуçларĕç ĕнтĕ. Кĕç: лутка айĕнҫи пурнăç сыв пултăр!—теççĕ ĕнтĕ вĕсем.

# Сенӗкпе айӑк пӗрђинђен.



## Кам-ши пуҫлӑх.

Куракан ҫырать:

„Пирӗн Кавалти (Вӑрма р.) йалӗҫтӑв ком претҫетаттӗлӗнђен мӗнле те пулсан хут туса пама ыйтсан: „Ответлӑ парттийӗн ҫекреттарӗнђен ыйтамха“—тет. Короххӑв пулмасан кӗнђелерте миҫе кун кӗтсе тӑмалла ши? Пӗлесђӗ, кам унта пуҫлӑх?“.

Претҫетаттӗлӗн пуҫӗ ҫук пулсан, пуҫлӑхӗ Короххӑв пулђ. Кам пӗлет тата!..

## Турра ӗненекен комунис.

Шурка йалӗнђи (Ҫӗрпӳ р.) Ђӑх Ваҫҫин (партти ђленӗ) амӑшӗ вилђӗ. Ана ҫӗнӗлле пытарас вырӑнне, ђиркӗве илсе кайса, ђан ҫапсах пытарђӗ. **Сохрон.**

Амӑшне ђан ҫапсах пытарђӗ пулсан, Ђӑх Ваҫҫине парттирен параппан ҫапсах кӑларса йарӑр тасату майӗпе.

## Ку—претҫетаттӗлех вара.

Паникасси (Шуп. р) йалсоветђӗн претҫетаттӗлӗ суйлав иртсенех налокпа сулӑм укҫине 30 тенкӗ те 42 пус ерех ӗҫсе йанӑ. **Арслан.**

Маттур иккен ку претҫетаттӗл. Кӗнӗ-кӗменех реппеттитси туса 30 тенке ҫӑтрӗ. Тепӗр суйлавђђен вӑл Паникассине ҫутатсах хурӗ.

## Ҫукӑн парсан та ҫук.

Ҫӗмӗртлӗхре (Тутаркас р.) вӑрмана тӗрӗс валеҫмерӗҫ. Лашасӑр, ђухӑн ҫынсем вутӑсӑр йулђӗҫ, вутӑпа сутӑ тӑвакан Куҫма Иаккуне татах вутӑ пађӗҫ, тет П—Н—У.

Ҫука тем ђул парсан та ҫуках. Парас луђђӗ пуйана. Шыв та лупашкана пухӑнать вӗт, тенӗ ӗнтӗ сирӗн йалти тӑмана пуҫсем.

## Милитсионер ӗнтӗ ҫакскер.

Аслӑ Сутӑн вырӑна тухса ҫӳрекен ҫеҫҫийӗ Ђарвӳллӗ Ђурађака (Иӗпреҫ р) килсе 9 ҫынна 3—4-шар ҫула хупмалла турӗ. Сут пӗтсен вӗсене хурал пӳртне хупса хуђӗҫ. Иершшов милитсионера ӗҫтернӗ те, ҫак ҫынсене Иершшов кӑларса йанӑ. Вара ҫӗр хута кӑшкӑрашса йурласа ҫӳрерӗҫ. Иурать-и ҫавӑн пек ҫынсене кӑларса йама? **В. П.**

Иурать. Анђах, кайран вӗсемпе пӗрле Иершшов милитсионера та тытса хупас пулать.

## Пуппа тус комсомолӗс.

Кӗҫӗнтурхан йалне (Шупашкар р.) пупсем килнӗ. Никкифӑрӑв комсомолӗс вӗсемпе килӗрен-киле ҫӳресе укҫа пуҫтарса пађӗ. Кайран, лаша кӳлсе пупсене леҫсе хӑварђӗ.

Комсомолран кӑларса йарсан, тӳрех тийеђука кӗрет ӗнтӗ вӑл. Комсомол йађейкки аван ӗҫлет пулђ сирӗн? Комсомолӗссем пуппа туслашнӑран калатпӑрҫке.

## Торф ҫунать.

Сурӑм шывӗ хӗрринђе (Елӗк р.) кӗркуннеренпех торф ҫунать, тесе пӗлтерет Пушшуйӗв й-ш.

Тупнӑ пысӑк йапала. Районсемпе йалсенђи пуҫлӑхсен пуҫӗнђи пуҫ мими ҫунса кайнӑ та, ытту шарлакан ҫук. Пӗђӗк йапала, мӗншӗн тесен.

## Упа.

Кӗҫӗнкаҫалри (Патӗрйел р.) Ҫементей Петӗрӗ Ђурађак пасарӗнђе пушӑт илнӗ. Каҫал вӑрманне сыхлакан Рышов матрос ырать те:

— Пӗр пӑт пыл парсан протоккол ҫырмастӑп, тет.

Петӗр пыл паман. Ун вырӑнне Петӗре 41 тенкӗ штрав тӳлемелле тунӑ. Ҫак йалти Кавӑрле те Рышова ҫур пӑт пыл панӑ, тет **Сартай.**

Упаран та хӑрушӑ иккен ку Рышов! Вӑрманти вӗллесене ватса ҫӳремест-и ҫын курман ђух?

---

# Пӗђӗккӗн ђӗпӗтетпӗр.

Шалђи тулиђђен. Кӗҫӗнкипекри (Вӑрнар р.) Иаккрав Матвийӗ пит хӑватлӑ кӗрђемепе сутӑ тӑвать. Иртен ҫӳрен милитсисен Матви патне кӗрсе тутанса тухма та йурать.

**Активис Карпппӑв.** Тахҫанах пыр шӑтӑкӗ типсе ҫӳренӗ Карпппӑвӑн.. Тем пек ӗҫес килет, —укҫа ҫук. Ҫын хӗрнӗ вӑрлаттарса йарса ӗҫкӗ тупас тесе, улахран таврӑнакан пӗр хӗре пикенсех вӑрласа сутма пикеннӗ. Карпппӑв, вӑл Иетӗрне р-нђи Турхла йалӗнђи комсомолӗс.

**Усала сиснӗ.** Аслӑкӑшкасри (Сӗнтӗрвӑрри р.) Матви Микулайӗ (партти кӑвтитаҫђӗ) усала сиснӗ. Парттирен кӑларса йариђђен пуппа туслашас тесе, ађине тӗне кӗртнӗ, усал йересрен хӑраса тата йумӑҫа кайнӑ.

**Проконнийӑй исполниттӗл.** Х. Ђутай районӗнђи сут исполниттӗлӗ Шитков Хватукассине пынӑ та килрен киле ҫӳресе 25 тенкӗ прокон укҫи пуҫтарса ҫӳренӗ.

Пупа кӗме пултарать ку ађа. Иарас пӗр-пӗр ђиркӗве.

# Кам çине кам çапла пăхат̆.

(„Капкăнăн 4-мӗш №-рне пула).




**Фискулҍтурнӗксемпе „Çамрăк Хресђен" хаçат пӗр пӗрин çини çапла пăхаççӗ. Анђах, нихăш те пӗр пӗрин питне курмăççӗ. „Лицом друг другу" лосăнкӗ курăнмаст̆**

## Такмаксем.

(«Ех яблочко» кӗввипе)

Нуккă, купăс йантăра!
Шăран урлă пирлӗ,
Шухăш килђӗ йурлама
Тата мӗскер кирлӗ? | 2 хут.
Капкăн тусӗ, еп—мушик
Ӗçпе тӗрмешетӗп,
Поетсемшӗн, вхимик!
Çак кӗввӗ тӗрлетӗп. | 2 хут.
Поетсем! Ех, поетсем!
Еккей ђаплăланђӗç:
Уйăх çинех хăшӗсем
Хăпарса утланђӗç! | 2 хут.

Тӗлӗкре леш, Хусанккай
Пушкинпах калаçнă тет!
Пăхăр, вӗçет, пай! пай! пай!
Иарапланран иртерет. | 2 хут
Хусанккай! Ех Хусанкай!
Ђăнах пултарагăн,
Иеççенина нипођђом
Шывă куçарагăн... | 2 хут.
Митта Иаккăлђ Васили
Туртнă ђăснă кӗввине,
Ех! Шалккă çав тери—
Кăштах пуçӗ «Сӗрӗмре»! | 2 хут.
Савнă тусăм сар Çаваç
Пăхăр, пуçне уснă!
Куђђанат̆, тет ирте каç...
Те ђăваш, те туркка!? | 2 хут.
А ниушлӗ Шупашкар
Саншăн кӗмӗк сăнлă мар?
Пӱрократ... тен пӱрократ...
Ђăт! Вилме не плакăт̆. | 2 хут.
Хаклă тусăм Алакер—
Прем шиккарни кăвалер!
Сăвву аван—«кӗтетӗп!»
Апђăххву! Супас,--пӗтетӗп!. | 2 хут.
Ваçанкка, Ей! Ваçанкка
Пăхха, тусăм тавралла,
Ритму тарнă Мускава
ГИЖ-а кайнă ташлама. | 2 хут.
Шеннипеле Иехмине
Тӗлӗкре тӗл пултăм,
Нипођђом! теç, хăйсене
Икӗш те пӗр шутлă! | 2 хут.
Ула ӗне пăрунне
Навус тулнă хӱрине,
Пăру хӱри тӗп пултăр
Поетсемех сыв пулђђăр! | 2 хут.
Унталла та, кунталла
«Курак» вӗçет сулланса,
Иăву санăн—пивнойра
Сӗнкек, ламса, йара пăр! | 2 хут
Кекик-какав хур пырат̆,
Пăрăн унтан ђăхă!
Мана Ђӗкеç йуратат̆
Кăмăлӗ ун мăнă! | 2 хут.
Иантра кармун, йангăра,—
Шăран урлă—пирлӗ!
Поетсемшӗн йурламах
Сана йури илнӗ—! | 2 хут.

Капкăнкӗлист Марк. (Аттай).



## Ăслă çынна мĕн култараť.




5 пуслăх „Капкăн“ илсен çав çеç култарма пултараť.

---

# Айлăмкассинţе пулса иртнĕ ĕççем.

Малтан мĕн пулассине пĕлнĕ пулсан Шăппăн Михали вăл каç ĕçмен те пулĕţţĕи тен. Çăварви çигнĕ пирки çеç ĕçрĕ. Тÿррине каласан çăварнийĕ çиссех кайманţţĕ те, —сăрине çăварви ваļļи тунă. Тутанса пăхас пулаť. Пĕр курка ĕçрĕ,—тутине пĕлеймерĕ, тепĕрре ĕçрĕ—кăмалне кайрĕ.

— Йурамалла сăра, аван пулнă—тĕрккесе лараť Шăппăн.

Тулта кутсăр-пуççăр тăман, мăрйинţе çил уласť.

— Мĕн праçнĕк çитмесĕрех кÿпсе ларан,—ĕлкĕреймĕсп тетĕн-им? У-у-х, сăвсăр!—йуваť ăна ţусталлă аллипе Мараç—унăн сăвнă арăмĕ.—Сана сăра кăтартма йурати?

— Ан вăрç матка, çак вигрене çеç ĕçсе йарап: тутанса пăхас терĕм.

— Кÿп, ĕнтĕ. кÿп хырăму çурăлса кайминха...

— Хăйă çутсанах Михаļана ăйхă пуса пуçламарĕ: пуçĕ йăвăрлапţĕ, куçĕсем хупăнаççĕ.

— Еп выртса канамха... Вăрат вара мана! Хапхана питĕрмен-терĕ те, выртсанах çывăрса кайрĕ Михаļа тутлă ăйăхпа.

— Вăл каçхи пек вихçан та тĕлĕк курман пуļ Михаļа. Пуйса кайнă пек. Ăна кулак тесе, сас памаççĕ.

— Çук, еп кулак мар, тĕрĕс мар вăл. Ман атте те пролетари пулнă, асатте лаша кĕтÿ кĕтнĕ—супĕлтетсе выртаť вăл ăйхăпа.

Вăранса кайрĕ. Пÿртре тĕттĕм. Ун çумĕнţе арăмĕ çÿçне-пуçне густарса выртаť. Çăварĕнţен сăра шăрши кĕрет.

Ах канаļйă! Хăйте ĕçнĕ-ха! Упăшкисене вăрçма çеç çав хĕрарăм. Тула тухса кĕрем-ха.

Арăмве вăратас мар тесе, ун урлă упаленкелесе каçрĕ те картишне тухрĕ. Тăман та çил те ţаранвă. Уйăх çути çапçутă.

Михаļа карта патне çывхарсанах ĕне мĕкĕрни илтĕнţĕ.

— Пăруламани ку ĕне?—шухăшлаť Михаļа—Керсе пăхам-ха..

Ĕне пăрушне çуласа тăраť. Карта алăкне хупмасăрах, арăмĕ патне васкаса кĕрсе кайрĕ. Васканипе ţăркуççийĕпе лаххана пырса перĕнţĕ.

— Ан, мур илесшĕ! Тăр ţасрах!.. Ĕне пăрулавă. Тăр, тетĕп!—ţышаť вăл арăмĕн айак пĕрţинţен.

Арăмĕ ним пĕлмесĕр сиксе тăţĕ. Куçĕсене йăвалаť.

— Мĕн урса çÿрен есĕ? Каларăм сана, сăра ан кÿп, тесе.

— Ене пăрулавă, Айта ţасрах!

Тумланмасăрах васкаса тухрĕç. Арăмĕ пăлтăртан хунар илсе çутрĕ.

Пырса пăхаççĕ, ţăнах та çав, ĕне пăрулавă: пĕрре çеç мар, икĕ пăру тунă.

Михаļапа арăмĕ иккĕш те çăварĕсене карса тăраççĕ.

— Ну иţ пĕрне, епĕ тепĕрне йăтăп... Ťуаţ, ťуаţ!.. Улăмпа ţĕркесе йăтса кĕţĕç те, те савăннипе, те хăранипе, çĕрĕпе çывраймарĕç.

— Мĕн тумалла кăсемпе?—ĕнсине хыçаť Михаļа.

— Мĕн тăвас тетĕн? Пурăнţţăр. Ÿсĕç.

— Вăл çапла та-ха.

— Тага мĕскер?

— Нимĕн те çук. Çывăр.

Михаļа ахаļтен ĕнсине хыçмарĕ пулĕ çав. Ку пăрусем телей мар, инкек кăна кÿţĕç. Ирхине Айлăмкас шавлаť, кĕрлет. Шăппăн Михаļи ĕни икĕ пăру туни пурне те ăнтан йараť. Хăшĕ телей теççĕ, хăшĕ шуйттан хăтланнă теççĕ, теприсем тата, куçĕсене ţейе хĕссе вăрттăн кулаççĕ.

— Ђимха, кӑтартӗҫ сана икӗ пӑру. Макӑрӑн! Саккувран иртме никама та хушман.

Ђи малтан Кӑркӑс Павӑлӗ ђупса пыђӗ Михађапа арӑмӗ ирхи апат ҫисе ларассӗ.

— Аван ҫывӑртӑра? Мӗнле сывлатӑр?

— Киђах, аванха! Еве икӗ пӑру туса пађӗ иртнӗ каҫ. Лар. Ҫӗрле тула тухрӑм та ене сасси. Пӑхатӑп...

— Ҫавӑнпа килтӗм те... Пӗтӗм йал шавлаҭ—тет, Кӑркӑс Павӑлӗ кутник ҫине ларса. Хӑй пӗрмай урайӗнђе выртакан пӑрусем ҫине пӑхаҭ.

— Ма шавлассӗ апла?—ыйтрӗ Михађа.

—Ӑс пама килтӗм сана. Пӗрне пыар ђасрах.—тем курӑн.

— Мӗн курмалли пур? Епӗ туман вӗт, ӗне туна.

Михађа та ӑвран кайса пӑрӑвӗсене пӑхаҭ. Ҫав вӑхӑтра йал хуралҫи килсе кӗрет:

— Ӑс пама килтӗм—тет хуралҫӑ — йал шавлаҭ пусса ҫи ђасрах пӗр пӑруна, ыттисем куриђђен.

— Епӗ те ҫавна калап та—тет Кӑркӑс Павӑлӗ. Михађан ҫилли киле пуҫларӗ.

— Ман ӗне икӗ пӑру тувиђе, камӑн ӗҫ? Мӗн кирлӗмара валаҫатӑр. Хађ ҫеҫ ҫуралнӑ пӑрӑва йепле пусас тетӗр?

— Хӑтте мӗн ту, пирӗн ӗҫ мар, епӗр сана шеллесе ҫеҫ калатпӑр. Тухса итлеха, йалта мӗн калаҫассӗ.

— Мӗа супӗлтетеҫҫӗ вара еппив? Ђӑтаймарӗ Мараҫ —Ӗрлевђӗҫ те пулати? Пирӗн йал ҫыннисем пекки пӗтӗм респуплӗкре те ҫук пуђ.

— Пури, ҫуки, пӗлместӗп те, хађ сире кулак шутне кӗртесшӗн.

— Мске-е-е-р? Тепӗр хут кала ха, мӗн терӗн ӗс?—Кӑшкӑрса пӑрахрӗ Михађа аллинђи кашӑкне пӑрахса.

— Епӗ те ҫавна калла килтӗм, ҫапла шавлассӗ, увӑн хађ виҫӗ ӗне пулаҭ, пӑрӑва ӳсме, нумай вӑхӑт кирлӗ мар ӑна,—теҫҫӗ.

Михађан пуҫӗ ахађ те ырататђӗ, хађ пушшех ыратса кайрӗ. Утӑ лавӗ пек купалавӑ вырӑнӗ ҫине кайса тайанђӗ те пӗр ђӗвмесӗр шухӑшласа лараҭ. Ахалтен усал тӗлӗк курӑнмарӗ пулӗ ҫав. Ыолӑха мар пулас. Мӗн тумалла пулаҭ? Нумайђђен шухӑшласа ларђӗ Михађа. Кайран куҫне уҫрӗ те, пӳртре Мараҫран пуҫне никам та ҫук. Вӑл та ним ђӗнмесӗр тӗлӗрсе лараҭ.

— Мӗн те пулсан тӑвас пулаҭ—терӗ Михађа арӑмӗ ҫумне ларса. Мӗн тунине вулакансем тепӗр № те пӗлӗҫ. С—н.

## Икӗ питлӗ ҫын.



Пулаҭ иккен ҫын. Ку май пӑхсан:

— Иулташсем! Епӗр, ррраповђисем...—текен оратӑр пекех,авђах , Капкӑна кутӑн тытса пӑхсан...

## Ҫӑварни кама ӑҫта лартаҭ.



Ӗҫме йуратакана кӗленђе ӑшне кӗртсе лартаҭ.



Нумайӑшне ҫакӑнта та кӗртсе лартаҭ.

# Ывăл йе çăварни хăни.

Шăнса хытрĕ Иакур муţи хулана çитиţ-ţен. Ăшăнма ĕмĕтленсе ţасрах хулара пурăнакан ывăлĕн хваттерне пыţĕ те: кăрнт, кăрнт! — тапрĕ шăннă çăпатипе алăкран.

— Уç штолĕ!.. вăранатăни, есрелĕ? терĕ.

— Мĕн ытла ирех çÿретĕн ес... Çывăрма та памастăн?.. терĕ ывăлĕ куçĕсене ţакаласа.

— Пасара килтĕм те... Ман пĕртак кĕрсе ăшăнасţĕ,—тесе, Иакур муţи шалалла кĕме тăţĕ.

— Тăхта ха!.. Мĕн сыснаппа тÿрех çĕмĕрсе кĕме хăтланатăв?.. Çăвăх илсе килтĕви?

— Кĕме йурамасти сан патна? терĕ тарăхса Иакур муţи.

— Йурамасţ, копешнă! Иулташсем пур унта... Çĕрккаç Хусантан килнĕ, çывăраççĕ!

— А... еп, Ваççа, ăшăнатăн та—кайап... теме тăţĕ çеç Иакур муţи, ывăлĕ трук алăка сăмса умĕнţех хатнĕ! хупса лартрĕ...

— А-ай, вĕţĕхсе кайрĕ Иакур муţи. Вăттăк анţав!.. Пăххаţ ăна! Ашшĕне кĕртмесţ! Мĕн тăвас кăна? Мăшкăл вĕт, мăшкăл!..

— Уç, Ваççа!.. кăшкăраţ Иакур старик. Ывăлĕ тепĕр хут сиксе тухрĕ.

— Мĕн, хурах пек хăтланатăн, сволţă!.. —терĕ.

— Сивĕ мана!.. Тата укçа кирлĕ! А ес... йытă çури, ман аţа мар! . терĕ Иакур муţи калла ţакса.

— Çук укçа ман.

—Ăçта ţикетĕн укçуна? Манран çăвăх...

— Сана мĕн ĕç? Çук.

Çав вăхăтра... шалтан темле мăмăк пек çемçе майра сасси илтĕнţĕ...

— Ваççă... милăй! Ты што шумиш?—терĕ.

Ţĕререн темскер çивĕţскерпе ţикнĕннех туйăнţĕ Иакур муţине. Вăтă сăмси симĕсленсе кайрĕ...

— Кам унта санăн?.. Иулташсем-и? Мĕнле суккăпа йăванса пурăнатăн, çтервă-ă?— кăшкăрса йаţĕ.

— Ан çухăр, ват тăмана! тесе, ашшĕн çăварне лап! хупласа лартрĕ—Çиţţас тухса кай кунтан, атту!..

Ашшĕне калла тĕртсе йарса, кĕрсе тарма тăţĕ. Анţах Иакур муţи те хăравçă ţăвашах мар çав. Тÿрех пуçне малалла йаţĕ. Лап пуçа шалалла ţикнĕ ţух, ывăлĕ ăна çамкаран кайалла тĕксе, алăка питĕ хыттăн шăрт! хупса, шалтан ţăнкăрт! питĕрсе лартрĕ...

Малтанах Иакур муţи ăна-кăна сисеймерĕ. Кайалла ţакма тăрсан—айтурух!.. Сухал алăк хушшине пулнă—лартнă... Пăрлăскер нисашто тухмасţ.

Хăçанţţен капла тăрас-ха? Алăка темĕн ţухлĕ ţышсан та, ывăлĕ тухмарĕ.

Вара... ţиперех пĕр ывçă сухал алăк хушшине йулţĕ! Ывăлне пин тĕслĕ йат парса, килелле утрĕ.

Те шăршна пĕлнĕ... Такки ăнланмарĕ ăна Иакур муţи, анţах çăварнире хăна пухсан, ывăлĕ лапах хуларан вĕçтерсе çитрĕ. Пÿрте кĕрсенех кăсийинţен „çинтиккат" кăларса лартрĕ. Ашшĕн çилли те таçта кайса кĕţĕ.

— Вот, вот, ман ывăл... покранимĕр,— текелесе, хураçи пек утса çÿрет.

Ĕçвĕ хĕрсе пыраţ. Ваççа хăвасемпе пĕрле сăмакун ĕçет ĕçет те, хайĕнне çавăрса хураţ. Ыттисене—ни-ни... Ţăтаймарĕ ашшĕ:

— Ара, мĕн пĕţţен кÿпен? Тугантар ĕнтĕ пĕртак хăнасене те, терĕ.

— Мĕ-ĕн? Ку хăвасене ĕçтермелли мар! Епĕ сан хăнусем çумĕнţе лармалла çынни? Епĕ сирĕн пек йĕпе сăмса мар!.. Еп, еп... Марш ман килрен!..

Ахалех алăк патнелле пыма тапратнă хăнасене сĕтел çинţен çăпала çăлса илсе, ăшалама пуçларĕ. Пĕр саманра аркатрĕ хăнасене... Хыççăн килхушшине сиксе тухрĕ... Анţах унта «шалу çийекепрен» те именмен тахшин... Пысăк риţакпа пĕррех хулпуççи урлă лашлаттарţĕ...

* * *

Ерне выртрĕ Ваççа килте, хулпуççийе хускатаймасăр. Килтисене те аптратса çитерţĕ: кăна пар, лешне пĕçер... Шăрш кĕрет... Пĕрре шÿрпе тăварлă пулвăшăн йăмăкне хытах тивертрĕ...

Аран-аран ăсаткаласа кăларса йаţĕç. Килхушши алăкне çитсен кайалла çаврăнса тăрсах:

— Килместĕп тек киле! Кирек-мĕн тăвăр маншăн пулсан—пурпĕрех!.. Ман пата та ан пынă пулăр!.. тесе хăварţĕ.

Ĕнтĕ ку—спаççипă вырăнне...

Нумай иртеги, сахал-и, пĕр каçхине, Иакур муţи çăпата туса ларнă çĕре, йалсовет пуçлăхĕ пырса кĕţĕ.

— Çакăнта, сирĕн Ваççа ваţţи сута каймалли повескă пур... Алимент шыраççĕ тет унтан...

— А мĕн вăл?—ыйтрĕ Иакур муţи, ăнланмасăр.

— Темле хĕрарăм... Аţа тăрантарма Ваççаран укçа шыраţ. Ваççа—аţа ашшĕ пулаţ еппин...

— Ţăнахи?!—сиксе тăţĕ Иакур муţи.

— Çаплах.

— Килте çук вĕт вăл?! Хулара! Ма кунта йараççĕ?..

— Хулара та çук вăл... Çавăнпа йанă кунта.

— Мĕнле апла?

— Ана вырăнтан кăларса йанă, тет...

Çав вăхăтра алăк шă-ăппăн уçăлţĕ те, пÿрте Ваççа кĕрсе тăţĕ.

— Ман килес... терĕ имшеррĕн.

— Ма килтĕн? терĕ ăна Иакур муţи. — Ес: киле килместĕп терĕн вĕт?

Ваççа хирĕç нимĕн те ţĕнеймерĕ. Пуçĕ усăнţĕ.

# Пурахха çав.

Комсомолĕссем хушшинţе ăçварпипе ĕçсе çапкаланса çÿрес йăла пĕтмен ха („Капкăна“ килнĕ çырусенţен).



Пирĕн Иван комсомолĕс
Самокопа «кĕрешет»:
Çук ун пĕртте намăс-симĕс,—
Пулăштоха тÿнтерет...



Иулмасĭ унтан пирĕн Макçăм—
Çамрăксемпе «çыхăнаĭ».
Хирĕç сăмах калассăн,
Хăлха ţикки тыттарăĭ.

**САКМАР М.**

---

## Аппарат.

Ех, аппарат, аппарат...
Кукăр-макăр йухтараĭ!
Кукăр-макăр йухтарса
Тырăран кăмăс кăлараĭ.
Мĕншĕн ханша тăвас мар,
Пĕр савăнса ĕçес мар?
Савнă ţунăм, савнă кум,
Ситрĕ пирĕн аслă кун...
Ăллă куна, тавтапуç,—
Иар йуррăна савнă тус!
Тытха, Ваţкка, пĕр курка!..
Аппарата пăх матка!
Шăнкăртатса йухаĭи?
Ţетвĕрт кленţи тулати?
Есĕ, кинĕм, пукане,
Пĕр куркине йарани?
Акă çитрĕ çураки,
Акма кирлĕ вăрлăххи,
— Ах, мĕн тăвас? Хăйамат
Çисе йанă аппарат.

---

— Кала-ха, кала!—терĕ каллах Иакур муţи. Сулахай аллипе ывăлне йанахĕнţен каит! ţышрĕ.—Пуçна ма усан? Саншăн алиментсем кам тÿллĕ-ха, е?..

— Сана мĕн ĕç? терĕ Ваçça ашшĕне.

— Мĕ-ĕн? Кама калатăн ес?.. Ме сана, ватсĕр!.. терĕ те Иакур муţи, ывăлне айăкĕнţен калăплă çăпатапа ţышрĕ. — Ме ак, тата! Кайса ыталаш ĕнтĕ хаţ леш, пĕркунхи майрасемпе... Астăватни, мана кĕртмерĕн?

— Ţарăн, атте!..

— Ишол! Ишол, йытă!..—хăваласа кăларĕ Ваççана ашшĕ...

Пулаĭ çав тĕнţере.

**ЛЕОНИТ ЛИНŢ.**

##Васкатăп... Сыв пул!

Хам паллакан пĕр çынна епĕ ик уйăх кайалла тĕл пултăм. Курмасни нумай пулатţĕ те:

— Шупашкар тĕлне йепле майпа тăлса автăн ес?—терĕм.

— Сиеса килтĕм. Васкатăпха, сыв пул! —терĕ.

Çак йулташах епĕ пĕр уйăх та виç ерне кайарах тĕл пултăм:

— Хаţ те кайман-ха есĕ?—терĕм.

— О!.. Тепĕр сиеса персе çитрĕм... Васкатăпха, терĕ.

Уйăх çурă кайалла татах тĕл пултăм çак çынна.

— Сиеса килтĕнем?—терĕм.

— Сиеса. Васкатăп!—терĕ.

Пиллĕк ерне кайарах куртăм ку çынна Шупашкарта:

— Сиеса-и?

— Сиеса...

Сакăр хут тĕл пултăм. Ыйтатăп:

— Сиеса-и?

— Сиеса, тет. Васкатăп, тет.

— Ţим, ан кайха! Сирĕн районта çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыраĭ?—терĕм.

— Çураки? Мĕнле çураки?.. Пĕлместĕп. Какуй унта çураки. Сиесран сиеса çÿресе пушанма çук...

— Вăрлăхсене тасатаççĕ-и?

— Калатăп, сана,—пĕлместĕп. Курман та, илтмен те. Те тасатаççĕ, те çук,—çăва патне... Сыв пулха! Васкатăп. Тырпул тухăçне хăпартасси çинţен йышăнмалла ресоçутси çырма уйăрнă комиççи ларăвĕнţе ларма ларатпăр... Васкатăп!—терĕ те, пуçран çапнă пек ţупрĕ ман йулташ. **А.**

# Наукăпа технĕккă.

## Шăхлиҭ хапрăкĕ.

Рапфак студенҭĕсем ҫак кунсенҭе тăм шăхлиҭ тумалли хапрăк тума тытăнаҫҫĕ. Ăна тума май пур. Тăмне Амерĕкрен кӳмеҫҫĕ,—Шупашкарти хула кооператтивĕ Рапфака тăратакан ҫăкăр шăхлиҭ тума ҫав тери лайăх, таҭка, нӳрлĕ. Ҫĕнĕ хапрăкра студентсем, хăйсемех ĕҫлеме шухăшлаҫҫĕ.

Малтанлаха тĕслĕх тунă шăхлиҭсем тăмран туниҭҭен пĕртте кайа мар. Уйрăм експĕрт комиҫҫийĕ пăхса тухнă хыҫҫăн, ҫăкăртан тунă шăхлиҭсем тăмран туниҭҭен те уҫă йантратса шăхăрни палăрҭĕ.

Тăм шăхлиҭ ăстисем Иванпа Микихвĕр.

## Пире пĕлтереҫҫĕ.

Ҭулхула йармăккине Шупашкарти хула кооператтивĕ 987.654.321.000.000 таҭка ҫăкăртан тунă шăхлиҭ йама план йышăннă.

—II—

Амерĕкри пĕрлешӳллĕ штаҭĕсен Шупашкарти сутунлӳ претставиттĕлĕ хула кооператтивĕн правлени претставиттĕлĕпе курса каласнă. Пирĕн кореспонтент пĕлтернĕ тăрăх, Амерĕкпе Шупашкар хушшинҭи шăхлиҭ суттин тоҭăвĕ ҫине ал пусма май ҫитнĕ ĕнтĕ.

## Йулашки хыпарсем.

Таҭка ҫăкăр шăхлиҭне ыйтса Киттайран, Перҫҫирен, Интирен, Йаппунран тата ытти патшалăхсенҭен те телеграмсем килеҫҫĕ.

## Аманулла килет.

Шупашкар хулин кооператтив правленийĕ Аманулла ханран телеграм илнĕ, Вăл: —Сирĕн ҫăкăртан тунă шăхлиҭсене туйанас тĕлĕшпе калаҫса татăлма Кантакăртан Шупашкара тĕве утланса вĕҫсе тухрăм, тенĕ.

## Корпо хатĕрленет.

Корпо претставиттĕлĕ «Капкăн» кореспотенҭĕсене ҫапла каланă:—Епĕр Амануллана хирĕҫ тухса илме хатĕр, тенĕ.

# Вилиҭҭен ҭупса йулас.



— Лашуна вилиҭҭен ма сутмасăн?
— Сутас терĕм те,—сутиҭҭен катаҭҭи ҭупса йулас, терĕҫ аҭасем ҫăварпире..

# Хаҫатсăррисене сăнатпăр.

Ҭăваш республĕкĕн районсенҭи парткомсемпе йалсенҭи партйаҭейккăсем пурте хаҫатсăр.

„Канашăн“ 41-мĕш номĕрĕнҭе «Ҭăваш хаҫат шурналĕсене камсем илсе тăраҫҫĕ»—саметкăра кăтартнă: «Партти йаҭейккисемпе комиттеҭĕсем „Канаш“—28, „Капкăн“—12, «Ҫамрăк хресҭен»—3, „Ĕҫхĕрарăмĕ“—6 илсе тăраҫҫĕ»—тенĕ.

Районсенҭипе йалсенҭи политтĕкпе хуҫалăх машшинне кам пăхса тăрат̆? Партти комиттеҭĕсемпе йаҭейккисем.

Выранти ҫитменлĕхсене камăн сирсе тăмалла? Парттин выранти оркăнĕсен.

Выранти ҫитменлĕхсене мĕн витĕр курма пулат̆? Ҭăваш хаҫаҭĕсемпе «Капкăн» витĕр.

Комиттетсемпе йаҭейккасем ҭăваш хаҫат-шурналĕсене илсе тăраҫҫи? Ҫук.

Хаҫат шурнал ҫук пулсан, йалти пĕтĕм пурнăҫ ҫине тата ҫĕнĕ хапха ҫине пăхнă пек кăна пăхма пулат̆.

## Пĕр йулташ ҫырат̆.

„...Вуламалли ҫуртсенҭе, хĕрлĕ кĕтессенҭе, ликпунктсенҭе нумайĕшĕнҭе „Капкăн“ ҫук. Каккуй вăл вуламалли ҫурт, йе хĕрлĕ кĕтес, кохта унта „Капкăн“ ҫук?..“—тет.

## Епĕр ыйтрăмăр пĕр йулташран.

— Сирĕн вуламалли ҫуртра „Капкăн“ пури, терĕмĕр.

— Ҫук, терĕ вăл.

— Мĕн вуласа кулатăр вара?—терĕмĕр те:

— Кутпуҫ халапне йараҫҫĕ те, ҫав тери ахăлтатаҫҫĕ, терĕ ҫав йулташ.

— Апла йурамаст̆. Намăс пулат̆, терĕмĕр те:

— „Капкăн“ миҫе пус тăрат̆-ха?—тесе ыйтрĕ.

Епĕр каларăмăр: 12 уйăха—1 тенкĕ, 6 уйăха—60 пус, 3 уйăха—30 пус, 30 куна—10 пус, 1 номĕрĕ—5 пус, терĕмĕр.

Килне ҫитсенех, ку йулташ „Капкăн“ потписҭĕкĕсене темиҫе пин пуҫтарнă. Анҭах, „Капкăн“ укҫине мĕнле атрĕспа йамаллине маннă кайнă, ҫава. Вара епĕр: Пирĕн атрĕс: г. Чебоксары, Канашская, 15, Ковтора газеты „Канаш“—тесе ҫыр, тесе ҫыру йатăмăр.

## Мĕн пуласса сисет.

— Ма есĕ пит сĕлкĕш ҫӳретĕн хаҭхаҫҫăн?

— Ташласа ҫӳресшĕм тата? Ав, „Капкăнра“ ҭăваш совтăмпăшалсен ăмăртувĕ пулат̆...

— Ҫийеле тухаймасран хăратна? Ан хăра, йулташ. Хамах ҫырса йарăп сан ҫинҭен: Иван Мерсавтсĕв первăй сорт совтăмпăшал вăл, тесе ҫырăп.

# Ыйтусемпе ответсем.

### Шалу памаҫҫӗ.

Епӗ: ҫӗр опҭи уполномоҫҭаннайӗнҭе ӗҫлеп; йаҭейккӑ сыруҫӗнҭе ӗҫлеп: вӑрман поверӗннайӗнҭе ӗҫлеп; шкул советӗнҭе ӗҫлеп; темиҫе ҫевсинҭе ӗҫлеп, тем те тӑватӑп, анҭах пӗр пус шалу та ҫук мана. Ҫынсем ҫӑпата хуҫса сутсах шокӑԓ ҫӳрме укҫа тупаҫҫӗ. Ес пур,—темиҫе тӗлте ӗҫлесе те пӗр пус укҫа тупаймастӑн. Калаха, ырӑ ретактӑр йулташ,—шалу парӗҫ-ши мана?

Никкантӑрӑв.

Тупнер, Ҫӗрпӳ р.

ОТВЕТ. Ытла нумай тӗлте «ӗҫлетӗн» есӗ, йулташ. Шухӑшларӑмӑр шухӑшларӑмар та, нихӑш «ӗҫӳшӗн» те шалу пама кӑтартса параймарӑмӑр. Ышӑнха тепӗр 10 ӗҫ, вара кӑтартӑпӑр.

### Сакмар ыйтаӗ пиртен:

„Капкӑн" хӑҫан 5 пине ҫитӗ-ши?—тет.

### Епӗр ответ паратпӑр.

Аслӑ Патӗрйеленҭи 2-мӗш сыпӑклӑ шкулти комсомол йаҭейккинҭе 15 активис. Кашни активис ҫултаӑклӑха 10-шар потписҭӗк пуҫтарса йарсан, вара „Капкӑн" шӑп **5000** ҫапӑнса тухаӗ.

Хакне ан манӑр: ҫулталӑка 1 тенкӗ, 6 уйӑха—60 пус, 3 уйӑха—30 пус, 1 уйӑха—10 пус.

### А. Арапуҫӗнҭи Иекорӑв паҭӑшкана.

Есӗ: Арапуҫӗнҭе Сӑвӑр Ҫтаппанӗ ҫук. Ҫук сынран илмелли те ҫук. Ҫӑвӑр Ҫтаппанӗ пур та епӗ унӑн 700 тӑваткӑл ҭалӑш тыррине вырса илмен, тенине шутсӑр хытӑ «ӗнентӗмӗр». Нумайтарах, йе кӑшт кайарах вырса илнӗ пуԓ, терӗмӗр вара.

Ҫырӑву ӑшне ҭиксе йанӑ 10 пуслӑх марккӑшӑн сана пӗр уйӑхлӑх »Капкӑн« йаратпӑр.

---

Кам ҭукунҫул копператтивӗнҭен шур ҫӑнӑх илсе, тушкӑ пӗҫерекен усламҫӑсене ҫутаӗ?

Леонҭйӗв Ф.

Кам Ухман ҭиркӗвӗн ҭанӗ ҫурӑкне касса кӑлармa ҭукунҫул реҫсне касакан пӑҭкӑ (хысна йапалине) хуҫса пӑрахнӑ?

Канаш сывӑхӗнҭе ҭукунҫул ҫинҭе ӗҫлекен Леонҭйӗв.

Касӑрмари ертел старастипе ҫул маҫтӑрне кам йаланах ӗҫкӗ параӗ?

Вӑрманкас Ухман пуйанӗ Леонҭйӗв Ф.

Улаха, йе йал ҫине тухсан, хӗрессӗр ҫӳрекен ҫамрӑксене ирӗксӗрлесе кам хӗрес ҭактараӗ?

Профсойус ҭленӗ Леонҭйӗв Ф.

Кам ытти ирсӗр ӗҫсене тӑваӗ?

Вӑрманкас Ухман ҫынни пуйан, куштан, суйа ӗҫлекен, ҭукунҫул ҫинҭе ӗҫлекенсен профсойус ҭленӗ Леонҭйӗвах.

Куракан.

«Капкӑн» ыйтаӗ, ответне те хӑйех параӗ.

1) Кам пуйан куштана хӳтӗлет? Ҭукунҫул ҫинҭе ӗҫлекенсен мескомӗ.

2) Ку йапаӑх ӗҫе тӗрӗслес ӗҫре кам сывӑраӗ? Канаш хулинҭи оркӑнсем.

3) Ӗҫлекенсем хушшинҭе Леонҭйӗвсем ан пулҭӑр тесен, кама вӑратмалла? Профсойус ҭленӗсем хушшинҭи Тишкерӳ йулташа.

4) Кун пек ирсӗрлӗхсем ан пулҭӑр тесен мӗн тумалла? „Капкӑн" ҫине сырмалла. „Капкӑна" ҫырӑнса илмелле.

**Унӑн хакӗ ҫулталӑка та 1 тенкӗ кӑна.**

## Ун ҫинҭен каламарӑр та.

Акрон исем ытла наукӑ ҭӗххеллипе каста нино хресҭенсем ӑнланаймаҫҫӗ куранаӗ. («Капкӑн»).

Хурт пек сӗрлет пуху. Претҫетаттӗл шӗвӗр пӳрнипе сӗтеле шаккарӗ.

— Ҭарӑвӑрха, халӑх! Акронома токлат тума ҫамах паратӑп, терӗ.

Акровом токлат тума пуҫларӗ:

— Ну, хресҭенсем, епӗ толшӗн сире каласа пама йепле коттовитсӑ тумалла ҫураки не. Иулташсем, пирӗн почти каждый год тырӑ пулмаӗ. Потому штӑ епӗр ҫӗре опрапотаӗ тума умеӗ тумастпӑр. Для того, чтобы тырӑ лайӑх пулӑр, тесен...

...Нушнӑ минераҭнай утопренисем примеҭаӗ тума. Формалинпа тырра промываӗ тумалла. Самай класнай,—тырра сортироваӗ тумалла...

Токлат пӗтсен претҫетаттӗл:—Толшно пыӗ, вопроссем ҫук? Ресоҭутси йышӑнапӑр. Мӗнле, принҭаӗ к ҫветенийу, провеҫти в шиҫӗн, тесе йышӑнатпӑр пулӗ, терӗ.

— Хирӗҫҫисем ҫуки ҫак ресоҭутсине?—Пӗр алӑ тӑратни те курӑнмаӗ.

— Сталӑ пӑӗ, принимаӗ тӑватпӑр?.. Пуху хупӑвӗҭӗ.

Пӗр ик ерне иртсен:

— Тырӑсене тасатма йала машшин килнӗ, тыррӑрсене илсе анӑр, тесе кӑшкӑрса ҫӳрет исполниттӗл кантӑкран-кантӑка.

Хресҭенсем ӗненмерӗҫ.

Ҫапах,—анса пӑхарха курмашкӑн, тесе хресҭенсем хурал пӳрҭӗ патнелле пухӑнҭӗҫ.

Машшин пӗр-пӗҭҭен лараӗ. Ун патӗнҭе претҫетаттӗл, шӑнса кайнипе сиккелесе тӑраӗ.

— Тыррусене ма илсех анмарӑр?—тет претҫетаттӗл.

— Мӗншӗн?

— Мӗншӗн? Пӗркун акровом токлаҭӗ хыҫҫӑн йышӑнвнине манна-ши?

—Нимӗн йышӑнмине те астумастпӑр. Унҭухне тырӑ тасатасси ҫинҭен каламарӑр вӗт, есӗр, тесе нумайӑҭҭен ӗнсисен хыҫне хыҫса тӑҭӗҫ.

Паҭкков И.

# Куç курăй те шăл витмест.

Тырă суртлас ĕç çăварни хушшинђе ђарăнсах ларăй.
(Çырусенђен).



ПУЛĂШКОМ ЂЛЕНĔ:—Тыррине суртлама кар, сăра ĕçме ђĕнме те килмеççĕ, кĕрех хуг.

Зам. Ответ. редактора П. Петров.

Чувашлит № 1151. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“. Нап. 4050 экз.